26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
24
ЫТЛАРИКУН
169(6406) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника КОНЕВА
Арми генералне ВАТУТИНА
Арми генералне МАЛИНОВСКИНЕ

Паян, августăн 23-мĕшĕнче, Çеçенхир фрончĕн войскисем, Воронеж тата Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕсенчи войскăсем флангсенчен активлă пулăшнипе, хаярла çапăçна хыççăн противник хирĕç тăнине çĕнтерсе те ХАРЬКОВ хулине штурмласа йышăнса илнĕ.

Çапла вара, Украинăн иккĕмĕш столицине—пирĕн Тăван Харькова нимĕçсен фашистла мерзавецĕсен пусмăрĕнчен хăтарса ирĕке кăларнă.

Харьков хулине йышăнса илессишĕн пынă наступленилĕ çапăçусенче пирĕн войскăсем пысăк пултарулăх, паттăрлăх тата маневрсем тума пултарнине кăтартса пачĕç.

Харьков хулишĕн пынă çапăçусенче Манагаров генерал-майорăн, Крюченкин генерал-лейтенантăн, Шумилов генерал-лейтенантăн, Гаген генерал-лейтенантăн, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн Ротмистровăн войскисем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн Горюновăн летчикĕсем, çавăн пекех тата М. И. Козлов генерал-майорăн 33-мĕш Гвардейски стрелковăй корпусĕн тата Колчигин генерал-майорăн 34-мĕш стрелковăй корпусĕн чаçĕсем уйрăмах палăрчĕç.

Харьков хулине ирĕке кăларнине палăртас майпа 89-мĕш Гвардейски Белгородски стрелковăй дивизие, 252-мĕш, 84-мĕш, 299-мĕш, 116-мĕш, 375-мĕш, 183-мĕш стрелковăй дивизисене, 15-мĕш, 28-мĕш тата 93-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизисене „Харьковски" ят парса малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

89-мĕш Гвардейски Белгородско-Харьковски стрелковăй дивизи;
252-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
84-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
299-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
116-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
375-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
183-мĕш Харьковски стрелковăй дивизи;
15-мĕш Гвардейски Харьковски стрелковăй дивизи;
28-мĕш Гвардейски Харьковски стрелковăй дивизи;
93-мĕш Гвардейски Харьковски стрелковăй дивизи.

Харьков патĕнче çĕнтерӳ тунине савăнăçлăн палăртас майпа паян, августăн 23-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици Мускав хамăрăн Харьков хулине ирĕке кăларнă паттăр войскăсене хисеплесе икçĕр çирĕм тăватă тупăран çирĕм хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Çапăçура отлични кĕрешнĕшĕн Эсир ертсе пыракан мĕнпур войскăсене, Харькова ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, тав тăватăп.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешсе вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи августăн 23-мĕшĕ.

Мухтав пирĕн паттăр воинсене!

Ĕнер пĕтĕм совет халăхĕ пирĕн аслă çулпуçăн, Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн татах тепĕр савăнăçлă приказне итлерĕ. Сталин юлташ пирĕн войскăсем Харьков хулине йышăнса илни çинчен пĕлтерчĕ. Çак хыпар пирĕн çĕршыври ĕççыннисен кăмăлне хавхалантарса çĕклет, çулпуçăн приказĕ пире тылра çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать.

Шупашкарти чылай предприятисенче ĕнер митингсем пулса иртрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри каçхи сменăра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем ĕнер 9 сехет те 30 минутăра пурте репродуктор патне пухăнчĕç. Диктор Сталин юлташăн приказне вулать. Пирĕн войскăсем Харьков хулине йышăнса илни çинчен илтсен, кашни рабочипе работница çавтери савăнса алă çупса ячĕç.

— Мухтав пирĕн паттăр воинсене!—теççĕ кашниех. Çак çĕнĕ савăнăçлă хыпар пирĕн кăмăла çĕклентерет, пире вăй-хăват хушса парать.

Çулпуçăн приказне итленĕ хыççăн рабочисемпе работницăсен митингĕ пулса иртрĕ. Бучельникова, Сироткина тата ытти юлташсем хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç. Вĕсем кашниех производствăра стахановла ĕçлесе паттăр Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшма сăмах пачĕç.

Фабрикăри каçхи смена ĕнер пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕ

Хĕрлĕ Çара ытларах продукци парассишĕн кĕрешетпĕр

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, «Авангард» промысла артельре производство программине срокчен тултарассишĕн, Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшассишĕн тырпакан ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса пычĕ. Май уйхĕ уйĕнчи ăмăртура артель коллективĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Продукци кăларасси ӳсрĕ.

Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан, Ленин орденлĕ «Динамо» заводри рабочисем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн артель коллективĕ хăй çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕ.

Артельри рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăсене тивĕçлĕн пурнăçлассишĕн вăхăтра пура илессĕр тăрăшса ĕçлеççĕ. Июль уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăларас плана артель 117 процент пурнăçларĕ. Уйрăмăнах чӳлмексем тăвакан, кăçатсем йăвалакан, çĕвĕ çĕлекен цехсем малта пыраççĕ. Артельри стахановецсем Роскин, Балабанов, Табаков юлташсем задание икĕ-виçĕ хут ытларах тултараççĕ.

Хĕл валли 1300 кубометр вутă хатĕрлесе хутăмăр, 60 тонна пахча-çимĕç хумалăх овощехранилище турăмăр, хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхсем валли 6 тонна утă хатĕрленĕ.

Артельри кашни рабочипе работница Хĕрлĕ Çара тăван çĕршыва пур майсемпе те пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ

М. СТЕПАНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем ХАРЬКОВ енче, тăшман контратакисене сире-сире ярса, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ.

БРЯНСК енче тата Спас-Деменск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă.

Донбасра, ИЗЮМРАН кăнтăртарахра тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем вырăнти çапăçусене ăнăçлăн туса пынă.

Августăн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 187 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 58 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Харьков енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Пĕр часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 3 тупă, 55 пулемет, боеприпассен 3 складне, тĕрлĕрен хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем, тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсси ушкăнне тытса илсе, нимĕçсен пĕр пин салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 150 салтакне çити тыткăна илнĕ.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Кун каçиччен пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. 80 танк тата 200 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем юханшыв урлă каçнă та, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсене икĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 3 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă, 9 хир туппи, 4 радиостанци тата боеприпассен 3 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче пирĕн танкистсем тăшмана йывăр çухатусем кӳреççĕ. Пирĕн 3 танк, Андрощук, Рокши тата Коваленко юлташсем командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен 6 йывăр танкĕпе çапăçма тытăннă. Пирĕн танкистсем тăшманăн 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Çапăçу хирĕнчен нимĕçсен пĕр танкĕ кăна сиенленмесĕр юлса тарма ĕлкĕрнĕ. Грибанов, Перцев, Брезгин тата Лисицкий танкĕсен экипажĕсем нимĕçсен 15 танкĕпе хирĕç пулнă. Кĕске çапăçура совет танкисчĕсем тăшманăн «тигр» йышши пĕр танкне çунтарса янă, 3 вăтам тата 4 çăмăл танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем вырăнти çапăçусене ăнăçлăн туса пынă. Çав çапăçусенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тăшман, совет çарĕсем малалла куçса пынине чарса лартма хăтланса, темиçе хутчен хаяр контратакăсем тунă, анчах та вĕсен контратакисем ăнăçман. Пирĕн подразделенисем çапла малалла куçса пыраççĕ. Тăшмана сире-сире ярса, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтереççĕ. Тыллимар даннăйсем тăрăх, паян кун каçиччен пирĕн чаçсем нимĕçсен пехотине пĕр полка çити тата 40 танк ытла пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 21 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Брянск енче пĕр гвардейски чаçри боецсем халăх пурăнакан пĕр пунктра нимĕç гарнизонне çавăрса илнĕ те хĕçпăшал пăрахма килĕшмен гарнизона пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă, 300 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Тепĕр участокра Кравченко лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ тăшман окопĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсен 25 салтакне тата пĕр офицерне тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра ултă кĕпçеллĕ пĕр миномет, темиçе миномет тата пĕр радиостанци пур.

* * *

Спас-Деменск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Пĕр участокра тăшман пехотин икĕ полкĕ, танксемпе авиаци пулăшнипе, пĕр чаçри боецсем йышăнса илнĕ высотасене атакăланă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсен контратакисене сирсе янă, тăшмана каялла хăваласа пырса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Çак çапăçура 1.500 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă, 14 тупă, вĕсенчен 5-шĕ хăй тĕллĕн çӳрекеннисем, 15 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн карапсем Хура тинĕсре тăшманăн 3000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă. Флот авиацийĕ тăшманăн торпедăсем яракан катерне тата хăй тĕллĕн çӳрекен баржине путарнă.

* * *

Калинин облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансем нимĕç гарнизонĕ тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Хурал тăракан салтаксене вĕлернĕ те авиаци бензинĕпе сĕрмелли материалсен складне вут тивертсе янă. Калинин облаçĕнчи тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктри нимĕç казармине сирпĕнтерсе янă. Взрыв пулнипе 70 гитлеровец пĕтнĕ.

* * *

Аяларахра гитлерла ирсĕрсем Харьков облаçĕнчи Веселое ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Пирĕн яла нимĕçсем йышăнса илсенех совет çыннисемшĕн çав тери йывăр пурнăç пуçланса кайрĕ. Фашистла çар влаçĕсем пирĕн ялта ĕлĕк улпутсемшĕн ĕçленĕ йĕрке (барщина) туса хучĕç. Комендант приказĕ тăрăх ялти пĕтĕм халăх 14 çултан пуçласа 65 çула çитнисем эрнере виçĕ кун нимĕçсем валли ĕçлесе тăмалла. Ĕçе тухмасан, фашистла ирсĕрсем совет çыннисене карцера пăрахатчĕç, хулăсемпе хĕнетчĕç. Иртнĕ çулхи кĕркунне колхозниксем нумайĕшĕ ĕçе тухма килĕшмерĕç. Çавăншăн гитлеровецсем 79 мирлĕ граждăна арестлерĕç те нимĕç каторгине хăваласа кайрĕç. Нимĕçсем пирĕн яла йăлтах юхăнтарса ячĕç, пĕтĕм халăха çаратса тухрĕç. Оккупаци вăхăтĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем колхозниксен 320 пӳртне, больницăна, ача çуртне, 2 пуçламĕш шкула, пĕр тулли мар вăтам шкула, клуба, почтăна тата виçĕ колхозпа пĕр совхозăн пĕтĕм хуралтисене ишсе антарчĕç е çунтарса ячĕç».

Акт çине алă пуснă: ялсовет председателĕ И. Самойленко, ялти çынсем М. Золотарь, С. Минкаренко, И. Пшеничная, С. Крутько тата ыттисем те.

Чăваш халăхĕн çырăвне вуланă хыççăн

Эпир, Заполярьери чăваш боецĕсемпе командирĕсем, чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çырăва илсе вуларăмăр. Тăван республика халăхĕн çырăвне вуланă хыççăн пирĕн çапăçури хастарлăх татах çĕкленчĕ. Эсир фронтпа çĕршывшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлени пире чĕререн савăнтарать. Сирĕн пысăк çитĕнĕвĕрсемпе эпир чунтан хавхаланатпăр. Сире малалла та хăвăр ĕçре пысăк ӳсĕмсем тума сĕнетпĕр.

Эпир Заполярьере çынçиен тăшманпа хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр çапăçатпăр. Чăваш республикинчен килнĕ лейтенант Калинин юлташ çапăçура паллă тĕслĕхсем кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илчĕ. Снайпер Александров юлташ «За отвагу» медаль тата «Отличный снайпер» значок илчĕ. Вăл пĕччен 70 фашиста ытла пĕтернĕ.

Тăван республикăри ĕççыннисем! Эпир сирĕн умра нимĕç фашисчĕсене хамăр çĕр çинчен тĕппипех тасатассишĕн хамăрăн юлашки юн юлмиччен çапăçма тупа тăватпăр. Эсир те, тылра фронтри пек ĕçлесе, фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах продукци парассишĕн тăрăшса ĕçлĕр. Килсе тухакан йывăрлăхсенчен ан хăрăр. Пирĕн кĕтнĕ ĕмĕт инçе юлмарĕ. Часах тăшман пуçне çухатĕ. Сире инçетрен, Заполярьерен сывлăх сунатпăр. Пире хисеплесе тăванла çыру янăшăн пысăк тав тăватпăр.

Красноармеец С. ВАСИЛЬЕВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Çĕмĕрлери „Большевик" заводăн уйрăмах палăрнă рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн Çĕмĕрлери «Большевик» экстракт завочĕн уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Федор Максимович **Баюкова** — диффузорщика.
2. Анна Сергеевна **Богачевăна** — паротурбина машинистне.
3. Александр Иванович **Гогина** —
4. Алексей Иванович **Закалябина**
4. Алексей Иванович Закалябина —механически цехăн тимĕрçине.
5. Владимир Иванович **Кабатова**—главнăй бухгалтера.
6. Тимофей Степанович **Клячкина** —чĕртавар склачĕн начальникне.
7. Елена Васильевна **Матвеевăна** —тĕп производствăн выпарщицине.
8. Александр Иванович **Мидзяева** —смена мастерне.
9. Степан Николаевич **Моторина** —механически цехăн слесарьне.
10. Клавдия Ивановна **Мышаковăна** — тĕп производствăн выпарщицине.
11. Сергей Димитриевич **Никифорова**—тĕп производствăн диффузорĕсене пушатакана.
12. Николай Александрович **Николаева**—ремонтно-механически цехăн начальникне.
13. Самуил Яковлевич **Розенберга** —парти бюровĕн секретарьне.
14. Матрена Яковлевна **Сизовăна**—паросиловой хуçалăхăн кочегарне.
15. София Федоровна **Смирновăна** —тĕп производствăн пăхăр диффузийĕн диффузорщицине.
16. Николай Михайлович **Шарськина**—тĕп производствăн диффузорщикне.
17. Иван Иванович **Ширшова** — электроцехăн электромонтерне.
18. Исаак Соломонович **Шустина**—завод директорне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи августăн 21-мĕшĕ.

Сталин юлташ кĕнекине вĕренеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Хамăр корр.). Сталин юлташ «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекене районри партипе совет активĕ тата колхозниксем активлăн вĕренеççĕ. Çак кĕнекене вĕренме 12 çĕрте кружоксем организациленĕ.

Уйрăмах Шолинори пуçламĕш парторганизацинчи кружок лайăх ĕçлет. Ăна коммунист Димитриев юлташ ертсе пырать. Унта 5 коммунист тата 12 комсомолец вĕренме çӳреççĕ.

Район центрĕнчи коммунистсем нумайĕшĕ Сталин юлташ кĕнекине харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Канаш горкоммунхозĕ хĕле начар хатĕрленет

КАНАШ. (Хамăр корр.). Горкоммунхоз планĕ тăрăх кăçалхи хĕл валли 24 çурта капитальнăй ремонт тумалла. Паянхи куна 9 çурта юсама тытăннă. Ыттисене хăçан юсама тытăнасси паллă мар-ха. 1943 çулта хулари çуртйĕрсене юсама сметăпа 17.700 тенкĕ укçа уйăрнă. Кунсăр пуçне 10 пин тенкĕ ссуда панă. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне 15 пин тенкине расходланă. Горкоммунхоз начальникĕ Ануфриев юлташ пĕлтернĕ тăрăх, кунта хĕллене хатĕрленме июнĕн 15-мĕшĕнчех тытăннă. Анчах, тĕрĕссипе илсессĕн, ку ĕçе халĕ те лайăххăн пуçăнман-ха.

Хулара 15 çемье валли хваттерсем çитмеççĕ. Вĕсене вырнаçтармалăх хваттер тупма кунта пур условисем те пур. Горкоммунхоза уйăх каярах 13 çемье вырнаçмалăх çĕнĕ çурт тума горисполком 97 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Паянхи куна çав ĕçе тытăнман-ха.

— Пирĕн хулара хваттер енчен аптăракансем туйăнмаççĕ-ха, — тет Ануфриев юлташ. Сав вăхăтрах хăйĕн папки ăшĕнче 20 ытла хваттер ыйтса панă заявленисем выртаççĕ. ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекен пĕр юлташ кăçалхи январĕн 7-мĕшĕнче хваттер ыйтса заявлени панă. Вăл заявленине ку тарăнччен те пăхса тухман. Çавăн пекех ытти заявленисене те вăхăтра пăхса тухмаççĕ.

Хулари мунча пĕлтĕрхи хĕлре те йĕркеллĕн ĕçлейменччĕ. Кăçал та пĕр кубометр вутă та хатĕрлемен. Июньпе июль уйăхĕсенче вутă çукки пе мунча 10-шар кун çеç ĕçленĕ. Горплан председателĕ Спирина юлташ предприятисемпе учреждениесем вутă хатĕрлемелли графика июлĕн 21-мĕшĕ тĕлне çеç туса çитернĕ. Вăл вăхăтчен горкоммунхоз кăçал вутă хатĕрлемелли графика пĕлмен.

Канаш горкоммунхозĕн хĕле хатĕрленес ĕçе вăраха ямалла мар. Пĕлтĕр ку ĕçре пулнă çитменлĕхсене шута илсе, кирлĕ пек вывод тумалла. ВКП(б) горкомĕпе горсовет исполкомĕн ку ĕçпе ытларах интересленмелле.

Ф. МАЛЫШКИН.

Çулталăкри плана Конституци кунĕ тĕлне тултарассишĕн

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Ураскильтри промартель коллективĕ—районра лайăх ĕçлесе пыракансенчен пĕри. Вăл производство планне кашни уйăхрах иртттерсе тултарать. Кăçал малтанхи çурçулти плана пилĕк уйăх хушшинчех пурнăçа кĕртнĕ.

Артельте ĕçлекенсенчен çурри ытла хĕрарăмсем. Вĕсем производствăн технологи процесне тĕплĕн вĕренсе алла илнĕ, çавăнпа пурте тенĕ пекех нормăна иртттерсе тултараççĕ. Пĕр цехри работницăсем А. Филиппова, Е. Мурзаева тата Е. Дмитриева юлташсем кĕске вăхăт хушшинчех ĕçе хăнăхса çитрĕç, халĕ вĕсем кашни кун вăтамран 1,5—2 норма тултараççĕ.

Çак кунсенче артель коллективĕ Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан «Динамо» заводри рабочисем чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕ. Коллектив кировецсен чĕнĕвне йышăнса, çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, ĕç тухăçлăхне 10 процентран кая мар хăпартма, брак туса кăларассине пĕтерме пулчĕ. Цехсемпе çуртйĕрсене тата ĕç инструменчĕсене хăйсен вăйĕпе юсама йышăнчĕç.

Районри ытти предприятисенче те Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Элĕкри çĕвĕ çĕлекен артель (председателĕ Ермолаева юлташ) пĕрремĕш çур çулти программăна 104 процент тултарнă, июль уйăхĕнче те планран иртттерсе чылай продукци туса кăларнă. Унта халĕ малта пыракан работницăсем: Абакумова, Чупракова, Алексеева юлташсем уйăхри заданисене ялан 150—200 процентран кая мар тултараççĕ тата лайăх продукци туса кăлараççĕ.

Кировецсен ырă пуçарăвне ырласа, ку артель членĕсем çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă.

Чăвашпромсоюзăн пулăшас пулать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Йĕкетри «Трудовик» артель чылай вăхăт хушши ĕнтĕ хăйĕн производство планне тултараймасть. Анчах та унăн руководителĕсем (правлени председателĕ И. Петров юлташ) артель ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ. Атă-пушмаксем тăвакан цехра калăпĕсем, шилĕсем çитмеççĕ. Унта 4—5 çын валли пĕр шилĕ кăна. Кирлĕ ĕç хатĕрĕсене артельтех тума май пур пулин те тумаççĕ. Çулталăк каялла атă-пушмак çĕлемелли машина стройран тухнă, ăна халĕ те юсамаççĕ. Подошвăсене касса тикĕслеме çĕçĕсем те çук.

Çĕвĕ çĕлекен цехра ĕçлекенсенчен нумайĕшĕсем июль уйăхĕнче ĕççĕр пурăнчĕç. Хăшпĕрисем вĕрен явнă çĕрте ĕçлерĕç. Цех июльти плана 60 процент çеç тултарнă.

Чăвашпромсоюзăн хăйĕн системине кĕрекен артеле тивĕçлĕ пулăшу памалла. Халĕ артель Промсоюз енчен нимĕнле пулăшу та илмест.

С. ШАДИН.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăвăрт вĕçлер, кашни килограмм тырра тирпейлĕн пухса кĕртер!

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташ патне чуринчен малтан рапорт яма право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту августăн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Ăмăртура миçемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Етĕрне	2
Советски	3
Октябрьски	4
Çĕрпÿ	5
Вăрнар	6
Куславкка	7
Шупашкар	8
Вăрмар	9
Çĕмĕрле	10
Красноармейск	11
Калинино	12
Элĕк	13
Сĕнтĕр	14
Тăвай	15
Ишлей	16
Канаш	17
Йĕпреç	18
Комсомольски	19
Шăхасан	20
Хĕрлĕ Чутай	21
Первомайски	22
Улатăр	23
Елчĕк	24
Чкаловски	25
Кувакино	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

Ăмăртура августăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕрремĕш вырăн йышăннă Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă памалли обязательствăна 25,3 процент пурнăçланă.

Ĕçе Дмитриев пек йĕркелĕр

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри «Заря» колхозăн 1-мĕш бригадине отечественнăй вăрçă участникĕ Петр Дмитриев ертсе пырать. Иртнĕ çулсенче юлса пыракан бригадăна вăл малти вырăна кăларчĕ.

Бригадир П. Дмитриев ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлет. Ыраш вырма тухиччен вăл хăйĕн бригадинче кашни килех çитрĕ, çурласемпе çавасене тĕрĕслесе тухрĕ. Çав вăхăтрах тата колхозниксене ыраш вырма тухассине, хăш участокра хăш вырăнтан вырма пуçлассине пĕлтерсе çÿрерĕ. Тепĕр кунне вара ыраш пуссине хĕвел тухиччен 51 çын вырма тухрĕç. Хĕрÿллĕ ĕç вăхăтĕнче бригадир Дмитриев ĕçлекенсем патĕнчен каймасть, вăл вĕсене ĕçлеме хавхалантарса, кăтартса çÿрет.

Пысăк тимлĕхпе ĕçлессĕ кувта пурте. Ĕç нормине пурнăçласа пыман колхозниксем пачах çук. Викторова Таисия кунне 52 тĕм (0,11 га), Варламова Серафима 61 тĕм (0,13 га) выраççĕ. Утмăл икĕ çулхи ватă карчăк Трофимова Анастасия 53 тĕм, 9 çулхи подросток Евлампьева Лидия 36 тĕм выраççĕ.

Уйра кулленех сĕм тĕттĕм пуличчченех ĕç пĕрет. Дмитриев кам миçе ĕçкунлĕх ĕçленине сиййĕнчех калаçа пырать, çапла туни колхозниксене лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Бригадăра стена хаçачĕсем кăлараççĕ, агитаторсем ĕçлеççĕ. Хамăр çĕршывăн политикăллă пурнăçĕпе ютçĕршывсенчи хыпарсене, хаçатсем çинче пичетлекен фронтри эпизодсене тата Совет Информаци Бюровĕн сводкисене колхозниксене пĕлтерсех тăраççĕ.

СТЕПАН АСЛАН.

АГИТАТОРСЕМ УБОРКĂРА

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Ĕç хыççăн касхине агитаторсем колхозниксене Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çинчен, хамăр çĕршывăн тата хăйсен колхозĕн ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç.

— Анчах тăшман вăйлă-ха, ăна тĕппипех çапса аркатман-ха, çавăнпа та пирĕн ирсĕр çĕленкалтасене хамăрăн çĕр çинчен пуçĕпех шăлса ывăтас тесен, фронтра та, тылра та мĕнпур вăя хурса кĕрешмелле,—тесе вĕçлерĕç вĕсем хăйсен сăмахне.

Колхозниксем агитаторсене тимлĕн итленĕ хыççăн килĕсене саланчĕç. Тепĕр кунне колхоз тырă вырмалли нормăна 182 процент пурнăçларĕ. Кашни колхозник хăйĕн талăкра тумалли нормине ирттерсе тултарчĕ. Çав кунах государствăна пĕрремĕш хут тырă леçсе пачĕç.

Çапла, «Атнаш» колхозри агитаторсен сăмахĕ колхоз ĕçĕпе сыхăнса пырать. Агитаторсен коллективне коммунист Матвеев юлташ ертсе пырать. Колхозниксем хушшинчи политикăллă-ăнлантарулла ĕçе коллектив анлăн туса пырать. Агитколлектив колхозри стена хаçатне аван ертсе пырать. Кашни бригадăрах стена хаçачĕн бюллетенĕсем тухаççĕ. Унта бригадăсемпе звеносем хушшинчи социализмлă ăмăртăва çутатса пыраççĕ, колхозăн ĕç планĕ епле пурнăçа кĕрсе пынине кăтартаççĕ, лайăх ĕçлекен колхозниксен ĕç опычĕпе паллаштараççĕ. Хаçата колхозниксем тимлĕн вулаççĕ, вăл колхозниксене уборка ĕçне вăхăтра тата пахка туса пыма чĕнет.

Стена хаçачĕ, унăн бюллетенĕсем кахалсемпе прогульщиксене канăç памаççĕ. Андреева колхозница ĕçе вăхăтра тухман, хăйĕн нормине тултарман. Хаçат ăна ятлать, тăрăшса ĕçлеменнине палăртать. Тĕрĕс çырни, вăхăтра кăтартса пани пулăшать.

Уйра, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте, витринăсем, кăтарту хăмисем тунă, витрина çинче партипе правительство постановленийĕсем тата ытти кирлĕ документсем пур. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене уйхиртен пухса кĕртесси çинчен кăларнă постановленипе пĕрлех, Сталин юлташăн приказĕсем тата Совет Информаци Бюровĕн юлашки вăхăтри пĕлтерĕвĕсем çакăнса тăраççĕ.

Бригадăсенче тухса тăракан бюллетенсемсĕр пуçне, колхозра пиллĕк кунра пĕрре «Колхоз çулĕпе» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Унăн редакторĕ комсомол организацин секретарĕ Петрова юлташ.

Агитаторсем ĕçре те пример кăтартаççĕ, хăйсем куллен тухăçлăн ĕçлеççĕ. П. Васильевпа Петрова юлташсем кашни кунах тырă вырчĕç, кулленхи нормăна ирттерсе тултарса пычĕç, ĕçе пысăк пахалăхпа турĕç.

Тырпулсене тăккаланине хирĕç агитаторсем хытă кĕрешрĕç. Колхоз председателĕ коммунист Матвеев юлташ колхозниксене кашни тăваткăл метрта пĕр пучах ÿксе юлас пулсан та колхозра 232 пăт тырă çухалса юлма пултарни çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарчĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем пучах пухас ĕçе йĕркелерĕç.

«Атнаш» колхоз уйри тырпулсене кĕске вăхăтра вырса пуçтарчĕ. Августăн 16-мĕшĕ тĕлне вĕсем çурхи тырăсене те вырса пĕтерчĕç. Государствăна тĕштырă памалли обязательствăна срокчен пурнăçларĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ АВГУСТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи тата çурхи тĕш-тырăсем вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă	Йĕтĕн татнă
Вăрмар	90,2	16,8	13,0	—
Шупашкар	90,0	27,4	15,9	—
Куславкка	85,2	26,4	14,6	—
Хĕрлĕ Чутай	83,3	37,7	22,8	74,0
Çĕрпÿ	82,8	33,8	21,2	—
Сĕнтĕрвăрри	82,3	26,4	15,1	—
Элĕк	82,0	21,4	7,7	—
Советски	81,6	17,9	7,6	—
Шăмăршă	80,2	34,2	9,7	20,6
Сĕнтĕр	79,5	28,8	12,8	—
Елчĕк	79,1	44,8	14,1	—
Ишлей	78,7	16,7	14,6	—
Калинино	77,0	17,2	7,6	—
Канаш	76,7	36,3	21,8	—
Октябрьски	76,6	19,1	11,9	—
Етĕрне	75,7	30,0	14,0	98,4
Вăрнар	75,6	36,5	16,8	85,7
Тăвай	73,3	15,4	9,1	—
Йĕпреç	72,4	30,8	21,2	18,1
Красноармейски	69,6	28,0	6,7	—
Çĕмĕрле	67,8	39,1	13,8	87,7
Шăхасан	67,7	21,2	11,3	—
Комсомольски	66,7	14,6	8,7	—
Первомайски	64,6	42,9	10,6	—
Чкаловски	62,1	11,4	7,9	—
Улатăр	60,8	67,9	23,9	46,0
Пăрачкав	52,7	29,2	9,1	26,4
Кувакино	44,8	31,6	23,4	48,7
Шупашкар хули	85,8	33,2	10,6	—
ЧАССР тăрăх	74,7	27,6	13,5	49,8
Августăн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	64,6	21,2	11,1	43,4

Сÿрĕк ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Халĕ районри колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем, уйрăм кахалсемсĕр пуçне, пĕр туйăмпа —тырпулсене тăкаксăр пухса кĕртес туйăмпа пурăннине, ĕçленине куратăн.

Çĕньял Упири Чапаев ячĕпе тăракан колхозра ун пек мар вара. Акă паян çанталăк уяр тăрать. Тырă вырма ирттерех тухма нимĕнле чăрмав та çук. Анчах 7 сехет тĕлне уйра пĕр çын та пулмарĕ. Тен урăх ĕçе кайнă пулĕ? Эпир ĕненмесĕр бригадирсем патне пытăмăр. Питех те тĕлĕнмелле, бригадирсем Гаврилова, Алексеев тата Андреев юлташсем хăйсем те ыйăхран тăман.

Кашни кун тенĕ пекех çавăн пек пулса пырать Чапаев ячĕпе тăракан колхозра. Колхозниксенчен мĕншĕн тырă вырма ирех тухмастăр тесе ыйтсан: «Паян сывлăм нумай ÿкнĕ» тесе ответлеççĕ. Колхоз председателĕ Кольцов та, бригадирсем те çавăн пек шухăшсемпе килĕшеççĕ. Ку кăна мар-ха. Кăнтăрла та вăя хурса ĕçлекенсем сахал. Ĕçрен вара тĕттĕм пуличченех таврăнаççĕ.

Çакăн пек ĕçленине пула ĕнтĕ колхоз тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе кая юлса пырать. Колхозăн 218 гектар çинчен тырăсем пуçтарса кĕртмелле. Ку таранччен 130 гектар кăна тырă вырнă. Пĕрремĕш бригадăра 30 çын. Вĕсем куллен алăпа 4 гектар вырма пултараççĕ, халĕ 2 гектар çеç выраççĕ. Колхозра 3 жнейка пур. Вĕсем те йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ.

Колхоз председателĕ Кольцов юлташ тата бригадирсем ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тăрăшмаççĕ. Колхозри коммунистсем те йĕркесĕрлĕхсемпе килĕшсе лараççĕ.

С. ШАДИН.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

КОМСОМОЛЕЦСЕМ УБОРКĂРА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри малта пыракан комсомол организацийĕсем хăйсен уборкăри ĕçĕсене кирлĕ пек йĕркелесе ячĕç. Комсомолăн «Янмурзино» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ С. Ильин юлташ) пĕтĕм вăйне тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хурать. Акă, Е. Спиридонова тата Ф. Никифорова комсомолкăсем, уборкăра алăпа тырă вырса, хăйсен нормисене 200—300 процент тултараççĕ. Е. Спиридонова юлташ кунне 0,08 гектар вырăнне 0,25 гектар вырать. Комсомолецсене кура, колхозниксем те нормăна ирттерсе тултараççĕ. Подростка А. Родионова 0,11 гектар вырать.

Уборкăна ăнăçлăн ирттерес ĕçре политикăллă-массăллă ĕç пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавна шута илсе, комсомолецсем ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пыраççĕ. ВЛКСМ организацин секретарĕ С. Ильин юлташ хăй агитатор пулса ĕçлет. Унпа пĕрлех союзра тăман çамрăксемпе хĕрсем те бригадăсенче хаçат-журнал вуласа параççĕ. Колхозра виçĕ кунта пĕрре «Большевик» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать, бригадăсенче боевой листоксем тухса тăраççĕ.

Кушарти «Свобода» колхозра Ф. Тимофеева, О. Иванова, В. Соловьева комсомолкăсем ачасен яслисенче заведующисем пулса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе те ертсе пыма ĕлкĕреççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Именево ялсоветĕнчи «Малалла» колхозра Анастасия Крылова комсомолка кунне çавапа 0,35 гектар çулса, хăех сыхса пуçтарать.

Районĕпе 132 комсомолец—агитаторсем, 45 комсомолец—стена хаçачĕн редакторĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Анчах уборка ĕçĕнче чылай комсомол организацийĕсем калама çук япăх ĕçлеççĕ. Мартынкино ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра (секретарĕ Юдина), Байзубино ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра (секретарĕ Никифорова), Медикасси ялсоветĕнчи «Муравей» (секретарĕ Петрова) тата ытти хăш-пĕр колхозсенче уборка ĕçĕ япăх пырать.

Çав колхозсенчи комсомол организацийĕсен секретарĕсем хăçан тивĕçлипе ĕçе тытăнĕç-ши?

Н. СКВОРЦОВ.

Комсомолецсем—уборкăри стахановецсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Анатри Кушмарари «Комсомолец» колхозри комсомолецсем уборкăн малтанхи кунĕнчен пуçласах уйра пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Ĕç планĕ тăрăх, колхозăн ыраша 6 кун хушшинче вырса пĕтермелле пулнă пулсан, вăл 5 кун çурăра вырса пĕтерчĕ.

Çак ĕçе вăхăтра вĕçлеме бригадăсемпе звеносем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яни пулăшрĕ. Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса пыракансем комсомолецсем пулчĕç. Машиновед А. Орешников комсомолец жнейкăпа вырса кулленхи ĕç нормине 155-шер процент тултарса пынă. Çавăн пекех алăпа вырнă çĕрте В. Воробьев, С. Белов, А. Ярукин комсомолецсем кулленхи ĕç нормине яланах 130—150-шар процент тултарса вырчĕç.

П. ЛЕНАР.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРЕ ПОЛИЦИ ВАЙЛĂРАХ ХĔСМЕ ПУÇЛАНĂ

СТАМБУЛ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Италири хаçатсем çырнă тăрăх, Бадольо правительствин политикине хирĕç пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ май, влаçсем пурнăçа «йĕркене кĕртес» тĕлĕшпе полици ĕçне вăйлатса яма чылай мерăсем йышăннă. Августăн 4-мĕшĕнче Туринри çар трибуналĕ 33 итальянеца чылай вăрăм вăхăтлăха тĕрмене хупмалла тунă. Çав итальянецсене «влаçсен распоряженийĕсене пăхăнмасăр тăрса пăлхав ĕçĕсене хутшăннă», тесе айăпланă.

Çавăн пекех тата Римра, Неапольре, Тарантора тата ытти хуласенче те нумай çынна арестленĕ.

«Стампа» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бадольо правительстви халăха çакна асăрхаттарнă: «шалти йĕркене пăсакансем мĕнле те пулин каçару е çăмăллăх пулассине кĕтме пултараймаççĕ», тенĕ.

ИТАЛИ ÇАРĔНЧЕН МАССĂЛЛĂН ТАРНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Мадридри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италирен Мадрида самолетпа вĕçсе килнĕ çынсем çапла каласа панă: Итали çарĕнчен салтаксем пинĕ-пинĕпе тараççĕ. Вăтам тата Кăнтăр Италире çулсем çинче дезертирсем тулли ех. Вĕсенчен хăшпĕрисем çурçĕрелле чакакан нимĕç салтакĕсенчен уççăнах мăшкăлласа кулаççĕ.

Вăрçа хирĕç тăвакан демонстрацисем халĕ Çурçĕр Италире кăна мар, Вăтам Италире те пула-пула иртеççĕ.

Албанире фашистсене хирĕçле пысăк демонстрацисем пулса иртеççĕ

СТАМБУЛ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Албанире оккупантсене хирĕç пысăк демонстрацисем пулса иртеççĕ. Демонстрантсем фашистла плакатсене çура-çура илеççĕ, оккупациллĕ чаçсен салтакĕсемпе офицерĕсене тыта-тыта хĕнеççĕ. Оккупантсем халăх хумханăвĕсене пусарма Эльбасана, Берата, Аргирокастрона, Корч-Шкодера пысăк çар чаçĕсем янă. Демонстрантсене хирĕç танксем те янă. Хуласен урамĕсенче юлашки кунсенче темиçе çĕр албанеца вĕлернĕ. Демонстрацисенче пулнă темиçе пин çынна тытса хупнă. Анчах Албани халăхĕ захватчиксемпе тата вăйлăрах кĕрешет. Нумаях пулмасть арестленĕ çынсене хуралласа пыракан итальянецсен отрядне Албани партизанĕсем вĕлерсе пĕтернĕ. Çав отрядăн офицерне тыткăна илнĕ. Итальянецсен командованийĕ Берат облаçĕнчи хăшпĕр районсене пĕр полк салтак янă. Анчах та партизансем итальянецсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă, полк командирне тыткăна илнĕ. Итальянецсен 800 салтакĕпе офицерĕ вилсе выртнă. Çав полкăн хĕçпăшалĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех партизансен аллине лекнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен авиацийĕ ĕнер Неаполь çывăхĕнчи Аверсăпа Беневбентори чугун çул склачĕсене тапăннă. Тăшманăн 14 истребительне персе ÿкернĕ. Истребительсем, бомбардировщиксем Монсерратори (Сардиния) аэродрома атакăланă. Августăн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ Кăнтăр Италири чугун çул объекчĕсене пыра-пыра çапнă. Августăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Неапольрен çурçĕртерехри Вилла-Литернори чугун çул склачĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Августăн 20-мĕшĕнче кăнтăрла тăшманăн Флиссингенри (Голландия) авиаци заводне тапăннă. Абвилльри (Франция) сортировăчнăй станцие атакăланă.

Данире Гитлер представителĕ ультиматум панă

Дани халăхĕ çав ультиматум çине Германие хирĕçле демонстрацисем туса ответлет

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Данире Гитлер представителĕ Вернер Бест Дани правительствине ультиматум панă. Çав ультиматумра вăл саботаж тунă датчансен ĕçĕсене Дани сучĕсене мар, Германи сучĕсене пама хушать. Дани халăхĕн анлă массисем çав ультиматум çинчен пĕлсен, вĕсем вăйлăн хумханма тытăннă. Чылай çĕрте Дани халăхĕпе гитлеровецсем хушшинче юнлă тытăçусем пулса иртнĕ: Оденсра, Свендборгра тата ытти хуласенче те вилнисемпе аманнисем пур. Çавăн хыççăн вара чрезвычайнăй положени туса хунă. Лару-тăру сивĕчленсе кайнă пирки Вернер Бест Данири фашистсен партийĕн мĕнпур членĕсене Копенгагена чĕнсе илнĕ. Германи ультиматумне хирĕç Дани халăхĕ питĕ хытă протестлет, çавна пула Данири Скавениус правительстви Германи требованине йышăнма хăяймасть.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместительне Максим Максимович Литвинов юлташа ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕн обязанноçĕнчен хăтарнă.

СССР Верховный Совет Президиумĕ Андрей Андреевич Громыко юлташа ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ вырăнне лартнă.

Дипломатиллĕ корпус Мускава таврăнни çинчен

1941 çулхи кĕркунне, Совет Правительстви йышăннипе, Совет Союзĕнчи дипломатиллĕ корпуса Куйбышев хулине куçарнăччĕ. 1943 çулхи август уйăхĕн варринче дипломатиллĕ корпус пĕтĕм составĕпе Мускава таврăнчĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Колхозран килнĕ çырусем

1. Колхоз председателĕ—агитатор

— Хăçан çывăрать-ши вăл: кăнтăрла — хирте мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырать, колхозниксене пулăшать, Совет Союзĕнчи тата тĕнчери ĕçсем çинчен каласа парать, Совет Информаци Бюровĕн сводкисене вуласа парать, çĕрле вара—итем çинче, авăн çапнине, ĕç йĕркине сăнаса тăрать, тепĕр чухне хăй те ĕçлеме тытăнать...

Çапла калаççĕ «Ĕмĕт» колхоз членĕсем хăйсен председателĕ Скворцов юлташ çинчен.

Скворцов ĕçре чăннипех те ывăнма пĕлмест: вырнă тырра паянах çыхса çĕмел тунине, çапнă тырра сăвăрса склада хывнине е тата хатĕрлев пунктне турттарса кайнине хăйĕн куçĕпе курмасăр вăл киле каймасть.

Анчах та колхоз председателĕн Скворцов юлташăн ĕçĕнчи чи паха енĕ—вăл ĕçри çитменлĕхе вăхăтра асăрхаса, ăна пĕтерме пĕлни, колхозниксене хальхи вăхăтри пысăк мероприятисене пурнăçа кĕртмешкĕн организацилеме пĕлни пулса тăрать. Вăл—ĕçре организатор, хĕрÿллĕ агитатор.

4-мĕш бригада тырă вырма пуçласанах ĕç планне пурнăçа кĕртсе пыман. Председатель хире тухнă та кашни колхозникĕн ĕçне тĕрĕсленĕ. Кунта пур колхозник те мар пикенсе ĕçлени курăннă. Сăмахран, Мария Тимофеева ĕç нормине тултарса пыман; ĕç çине вăл сÿрĕккĕн пăхнă. Председатель кану вăхăтĕнче 4-мĕш бригадăри колхозниксемпе калаçу туса ирттернĕ. Вăл çак бригадăри Екатерина Герасимова, Иван Петров колхозниксем лайăх ĕçлени çинчен каласа панă, Мария Тимофеевăна начар ĕçленĕшĕн асăрхаттарнă.

— Эпир тăшмана хăвăртрах çапса аркатас тетпĕр пулсан, — тенĕ Скворцов юлташ,—пирĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, мĕнпур тырпула вăхăтра пухса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене срокра татмалла. Çакна ĕнтĕ Тимофеева юлташăн ăнланса илес пулать.

Колхозниксем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи ĕçсемпе питех те интересленеççĕ. Çĕнĕ хаçатсем килсен, председатель колхозниксем патне пырать те, вĕсене Хĕрлĕ Çар тăшмана хирĕç вăйлăн тапăнса пыни çинчен, союзниксем Сицилире ăнăçлăн вăрçни тата ытти çинчен те вуласа, каласа парать. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Орелпа Белгород хулисене йышăнса илнĕ пирĕн войскăсене тав туса панă приказ колхозниксен ĕçри хастарлăхне уйрăмах вăйлăн ÿстерчĕ. Тепĕр куннех, митинг хыççăн, ĕç планне колхозниксем 120 процент чухлĕ пурнăçларĕç.

Скворцов юлташ çапла каласа парать:

— Нимĕç захватчикĕсемпе эпĕ Ленинградпа Тихвин патĕнче çапăçрăм. Çав ирсĕрсем пирĕн халăха мĕн кÿнине эпĕ хам куçпа курнă. Эпĕ нимĕçсене мĕнпур чун-хавалĕнчен курайми пулса çитрĕм. Аманнă хыççăн хамăр колхоза таврăнсан, эпĕ колхозниксене нимĕçсем çинчен мĕн курса-илтнине пурне те каласа патăм. Колхозниксем ăна пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме тата фронта тырпулпа ытти çимĕçсем ытларах парса тăма тупа турĕç.

Колхозниксем хăйсен сăмахне тÿрре кăлараççĕ. Виççĕмĕш бригада (бригадирĕ А. Яковлева) государствăна тырă парса татнă, уйхирти тырпулсене часах пĕтĕмпех пухса кĕртет, вăлах кĕрхи тырăсене пуринчен малтан акма тытăннă. Ыттисем те çавăн пекех хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ.

Çапла ĕнтĕ агитаци ĕçне йĕркелеме, колхозниксене хальхи вăхăтри пысăк событисем çинчен ăнлантарса пама пĕлни колхоз руководителĕшĕн мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çакăнтан та уççăнах курăнса тăрать. Çакăн хыççăн вара Скворцов юлташ кашни калаçăва тĕплĕн хатĕрленме, отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи уйрăм эпизодсене блокнот çине çырса илме тытăннă.

— Халĕ,—тет Скворцов юлташ,— агитациллĕ ĕçре Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнеки уйрăмах пысăк пулăшу парать. Эпĕ ăна хам тимлĕсех вĕренетĕп.

Çине тăрсах, тимлĕн вĕренсе пынине пула, Скворцов юлташăн агитациллĕ сăмахĕ татах та ытларах вăйланчĕ. Ун сăмахĕн вăйĕ вăл—хăйĕн кашни калаçăвне колхозăн задачисемпе çыхăнтарса пынинче, чи лайăх стахановецсен опычĕсемпе пур колхозниксене те паллаштарнинче, начар ĕçлекен колхозниксене критикăланинче пулса тăрать. Çакă вăл çийĕнчех хăйĕн результачĕсене кÿрет.

Скворцов юлташ ертсе пыракан «Ĕмĕт» колхоз тырпулсене пухса кĕртес, государствăна тырă парас тата кĕрхи тырăсем акас ĕçсене вĕçлесе пырать. Колхозра ĕç дисциплинине пăсакансем çук темелле, ĕçе пĕчĕккинчен пуçласа ваттине çитиччен пурте тухаççĕ.

Николай АСАНОВ.

Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз.

РСФСР НАРКОМЗДРАВĔН ШУПАШКАРТИ ФАРМАЦЕВТ ШКУЛĔ

1943—44 мĕш вĕренÿ çулĕ умĕн вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.

Шкул провизор помощникĕсене хатĕрлет.

Виçĕ çул вĕренмелле.

Шкула арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ, 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене. Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕрентнинчен кая пĕлмелле мар.

Çаксене экзаменсĕрех илеççĕ: а) 1941, 1942, 1943 çулсенче туллимар вăтам шкулсенчен «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене, б) вăтам шкулсенчен, рабфаксенчен, техникумсенчен, педагогика училищисенчен е ытти специальнăй шкулсенчен вĕренсе тухнисене.

Ыттисене пурне те экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе памалла: вырăс чĕлхи, чăваш чĕлхи, арифметика, СССР Конституцийĕ, хими.

Заявленисене сентябрь уйăхĕн 30-мĕш числиччен илеççĕ.

Заявленисене шкул директорĕ ячĕпе çырмалла. Заявленипе пĕрле çак документсен подлинникĕсене ямалла: вĕренни çинчен калакан свидетельство, хăçан çуралнине пĕлтерекен свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, ялсовечĕ çирĕплетсе панă икĕ фотоÿкерчĕк.

Шкулăн хăйĕн общежити пур, выртса тăма вырăн-минтерсем параççĕ, столовăй пур.

Заявленипе пĕрле е ыйтса пĕлмелле пулсан 60 пуслăх марка ямалла.

Шкулăн адресĕ çапла: гор. Чебоксары, Чувашская ул., 15, Фармацевтическая школа.

2—1

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 23-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

ПРИНЦ И НИЩИЙ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Шупашкарти кинотеатрта

августăн 14-мĕшĕнчен пуçласа кашни ытларикун, кĕçнерникун, шăматкун тата вырсарникун сеанссем пуçланас умĕн фойере çар чаçĕн духовой оркестрĕ калать.

Пуçламăшĕ 19 сехет те 15 минутăра тата 21 сехет те 15 минутăра.

ЧĂВАШСЕЛЬХОЗСНАБА çак работниксем васкавлăн кирлĕ: запас чаçĕсемпе ялхуçалăх машинисен отделĕн начальникĕ, металпа мотиз отделĕн начальникĕ, яд химикачĕсемпе минераллă удобренисен отделĕн начальникĕ, главнăй бухгалтер, статистик.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калинин урамĕ. 34. Телефон 0—94.

2—1

Сельхозснаб çумĕнче çĕнĕрен уçăлакан СЕЛЬХОЗПРОМСНАБ конторине çак ĕçсене ĕçлекенсем кирлĕ: главнăй бухгалтер, счетовод-кассир, сăмала юхтарма, тикĕт тата урапа маçĕ хатĕрлеме пĕлекен специалист, ут тавраш, урапа-çуна тума пĕлекен специалист.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 34. Телефон 0—94.

2—1

ĔÇ РЕЗЕРВĔСЕН УПРАВЛЕНИНЕ çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор тата экономист.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Советсен çурчĕ, 4-мĕш хут, 409-мĕш пÿлĕм. Телефон 1—66.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 36 Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.